Владимирова О. Кӳлнĕ учĕсене чараймасăр : [поэтăн халăх сăмахлăхне пухас ĕçри еткерĕ çинчен] / О. Владимирова // Тăван Атăл. – 2008. -

**Ольга ВЛАДИМИРОВА**

**филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ**

# «Кӳлнĕ учĕсене чараймасăр...»

К.В.Иванов пултарулăхĕ пирки тĕпчевçĕсем нумай çул калаçрĕç пулин те, вилĕмсĕр классикăмăр ĕçĕ-хĕлĕ паянхи ăрушăн та малашлăхлă. Илемлĕ сăмахлăхпа литература пĕлĕвне вăл ĕмĕрлĕх символ пулса кĕрсе юлнин пĕлтерĕшне халăхăмăрăн аваллăхран тымарланакан ăнĕн паллисене тĕнче умне тивĕçлĕ кăларнинче куратпăр.

К.В.Ивановăн халăх сăмахлăхне пухас ĕçри еткерĕ пысăк пулни паллă. Çĕр пин юраллă-сăмахлă чăваш халăхĕн сăмах вĕççĕн çӳренĕ нумай сăвви-юррине паянхи куна çитерме мехел çитернĕ вăл. Çапла легенда çӳрет: йывăр чирлесе выртнă кунсенче аслă поэтăмăр асне халăхăн философи тарăнăшлĕ пĕр юрри килнĕ-мĕн. Сăмахăм «Кӳлнĕ учĕсене чараймасăр...» ятлă чăваш халăх юрри пирки:

1. Кӳлнĕ учĕсене чараймасăр
Ялăм тавра виççĕ те çаврăнтăм. – *2 хут*

2. Чĕннĕ хăнисене кĕте-кĕте
Çĕр варринче виççĕ те вăрантăм. – *2 хут*

3. Хăпараймăп çӳллĕ тусем çине,
Хуратаймăп шурă та чăлхама. – *2 хут*

4. Таврăнаймăп, тăвансем, пĕр кайсан,
Тек юрлаймăп çакă та юррăма. – *2 хут*




ТĔПЧЕВ

Юрă кĕвви сăвăç шăпин синкерлĕхне, вăл пурăннă вăхăтри самана сывлăшне пирĕн пата тасан, çӳл сывлăшлăн илсе çитерет. Этем кун-çулĕ, ун трагизмĕпе драмăлăхĕ пĕтĕçнĕ унта. Трагизм сĕмĕ вара юррăн кашни çавринчех вăй илсе пырать: *«Кӳлнĕ учĕсене чараймасăр / Ялăм тавра виççĕ те çаврăнтăм...»* Мĕншĕн ял тавра çаврăнма шухăш тытнă-ши юрăри лирика геройĕ? К.В. Ивановăн «Нарспи» поэминче те асăннă символла сăнар пĕлтерĕшлĕ ăнлавсем чылайçке: тӳпепе çĕр, иртнипе пуласси т.ыт.те. Ыйтăва Г.И. Федоров тĕпчевçĕ шухăшĕпе çирĕплетни вырăнлăн курăнать: «Чăвашсен ăн екки, вĕсен кун-çул хакăлĕ, чун ăслайĕ. çавра, тавра сăнарсенче ӳтленет пулĕ ытларах. Иванов та ӳсĕм таппи çавраланса хавхаланнине мала кăларать вăл...» (Г.И. Федоров. Хай тĕнчине пăхăнать / Константин Васильевич Иванов: тĕпчев ĕçĕсем. Ш., 2000). Философиллĕ анлăлăх малаллах талпăнать: *«Чĕннĕ хăнисене кĕте-кĕте / Çĕр варринче виççĕ те вăрантăм»*. Çĕр варри сăмах-сăнар каллех шухăш паллиллĕн ӳкерĕнет: чунри йывăрлăха сирме чĕннĕ хăнасем килмеллеччĕ, анчах килмерĕç. Çине-çинех пулса пыракан шалти хирĕçлев *пурнăçăн, çут сантал ăкăн варри* патне, трагедиллĕ шухăшлав патне илсе çитерчĕ: *«Хăпараймăп çӳллĕ тусем çине, / Хуратаймăп шурă та чăлхама. / Таврăнаймăп, тăвансем, пĕр кайсан, / Тек юрлаймăп çакă та юррăма»*.

Халăхра К.В. Ивановăн вилес умĕнхи юлашки сăмахĕсем çапларах пулнă теççĕ: *«Вилетĕп пуль, аннем: Çӳл ту çине хăпартрĕç...»* Çак каларăш пирки шухăша кайса В. Энтип 1977 çулта «Слакпуç мăйăрĕ» ятлă сăвă ярăмĕ шăрçаланă, асăннă сăмахсене эпиграф вырăнне илнĕ. В. Энтиппе хăйĕнпе курнăçма та май килчĕ. Иккен хăй вăхăтĕнче вăл Слакпуç тăрăхĕн техĕмне ăша илме ятарласа аслă поэтăмăрăн çĕршывне çитнĕ. Унти пĕр ватă кинемей К.В. Ивановăн юлашки сăмахĕсем чăннипех çапла пулни чăн иккенне пĕлтернĕ (каярах вăл шухăша Ухсай Яккăвĕ те çирĕплетнĕ).

*Вилес самантсенче –*
*Теме манса мĕн кĕтнĕн –*
*Мĕскер каласшăн пулнă-ши*
*поэт?*
*Вăл – вăрттăнлăх.*
*Ăна хĕвел тин чĕртнĕ*
*Чĕнӳçĕ-асамат анчах пĕлет!*
*Чăлл! çутăлчĕ тӳпе,*
*Кун йăлкăшма пуçларĕ –*
*Çӳл ту çинче эп куртăм*
*поэта...*
(В. Энтип)

Ту вăл – пурнăç малашĕ. Асăннă сăнар К.В. Иванов асне ахаль килмен-тĕр: эпос пĕлтерĕшлĕ символ сăмахлă культурăмăр аталанăвĕнче ăнсăртран мар, мĕн ĕмĕртенех философи сĕмĕллĕ калăпланать. Мифологиллĕ шухăшласа пурăнакан чăвашăн ĕçкĕçикĕре, кĕреке умĕнче юрлакан пуç çапан юррин йĕркисенех илер:

*Çӳл ту çинче аслă ял,*
*Аслă ял варринче аслă*
*картиш,*
*Аслă картиш варринче*
*çавра çурт,*
*Çавра çурт варринче*
*çавра сĕтел...*

Халăхра анлă сарăлнă çак юрăра та *çавра, варри* йышши сăмахсем асăрхатпăр. Ку ĕнтĕ чăваш халăхĕн ăнĕ шырав фило-

софиллӗ пулнине ӗнентерекен тепӗр тӗслӗх пулса тӑчӗ.

В.Г. Родионов тӗпчевҫӗ чӗлхе тата кӗлӗ сӑмахӗсенче те *ту* символ-сӑнар пӗлтерӗшӗ пысӑккине палӑртать: «Эпикӑллӑ чӗлхесенче халӑхӑн мифла тата космогониллӗ ӑнлавӗ сыхланса юлнӑ. Ҫӗр, Ама йывӑҫ, Тӳпе – ҫак виҫӗ япала авалхи ҫыншӑн тӗнче тытӑмӗ пулнӑ» (В.Г. Родионов. Чӗлхе, кӗлӗ тата пил сӑмахӗсем / Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ: тӗпчевсемпе текстсем. Ш., 1989). Тӗслӗх илсе пӑхар: *Ылтӑн ту, ылтӑн ту ҫинче ылтӑн вӑрман, ылтӑн вӑрманта ылтӑн пӳрт, ылтӑн пӳртре ылтӑн кӑмака, ылтӑн кӑмакара ылтӑн вут! Ырӑ вутӑм, лар вырӑнна!..*

И. Юркинӑн прозӑлла сӑввисенчи ту сӑнарне тимлер-и: *«Улӑхрӑм ҫӳллӗ ту ҫине пуҫра сывлӑх пур чухне. Манран ҫӳлте, ман тӗлте, кӑвак пӗлӗт айӗнче, ӑмӑрт кайӑк вӗҫет ярӑнса. Мӗншӗн вӗҫетши ҫав кайӑк, хӑй йӗри-тавра ҫаврӑнса, ҫӳлтен аялалла ыткӑнса? «Йӑвама тустарма улӑхманши? Чӗппӗмсене тытма хӑпарманши?» – тет-тӗр, мӗскӗн, хуйхӑрса. Эпӗ унӑн йӑвине тустарма улӑхман, Чӗпписене тытма хӑпарман. Улӑхрӑм эпӗ ҫӳллӗ ту ҫине ҫӳлтен аялалла пӑхмашкӑн, хамӑр тӑвансене курмашкӑн».*

Ҫеҫпӗл Мишши пултарулӑхӗнчи *ту* та – шырав философийӗн палли:

*Эп вилсен – мана пытарӑр*
*Ҫӳллӗ ту тӑрне.*
*Йӑмрасем лартса хӑварӑр*
*Ман тӑпрам ҫине.*

*Ман ҫинчен пӗтӗм ҫӗршывӑм*
*Курӑнтӑр вара,*
*Тӑпрам ҫинчен курма пултӑр*
*Ват Шупашкара...*

Ҫапла вара, чӑваш сӑмахлӑхӗнчи *ту* сӑнарӗ хӑйне евӗр культура символӗ пулса пурӑнать. Вӑл хальхи илемлӗ литературӑра та анлӑ сарӑлнӑ сӑнлӑх (Хв. Уяр, М. Карягина т.ыт.те).

«Кӳлнӗ учӗсене чараймасӑр...» юрӑри ритмпа интонаци пысӑк содержаниллӗ: ҫаврӑмсенчи тӑтӑш каланакан пӗр пек сасӑсен кӗвӗ янӑравлӑхӗ, грамматикӑн пӗр формиллӗ састашӗсем, синтаксис повторӗсем (виҫҫӗ ҫаврӑнтӑм – виҫҫӗ вӑрантӑм, хӑпараймӑп – хуратаймӑп, таврӑнаймӑп – тек юрлаймӑп, чӑлхама – юррӑма т.ыт.те) ҫемӗри сӑнарлӑ шухӑшӑн эмоцине татах та вӑйлатаҫҫӗ, туйӑмсен витӗмлӗхне ӳстереҫҫӗ.

К.В. Иванов юрланӑ тенӗ юрӑ калӑпӑшӗпе пысӑках та мар, анчах ҫав икӗ йӗркелӗхсенче чӑваш халӑхӗн чунлӑх шайне уҫса паракан шухӑшсем чылай. Унтах наци ӑстӑвӑмӗпе трагедиллӗ тӗнче туйӑмӗ, аваллӑх тымарӗ, философи анлӑшӗ...

Литература каҫалӑкӗн ҫӳллӗ тӑвӗ ҫине хӑпарчӗ Константин Васильевич Иванов. Чӑваш кунҫулӗн ӗмӗрхи сӑвапӗ пулса тӑчӗ.